Н.И.Ашмарин

# ТЮРКОЛОГИН ИРТНĔ КУН-ÇУЛĔ ТАТА УНĂН ХАЛЬХИ ТĂРĂМĔ ÇИНЧЕН

**1926 ÇУЛХИ кĕçĕн кăрлачăн 26-мĕшĕпе пуш уйăхăн 5-мĕшĕ хушшинче Азербайджан тĕп хулинче Бакура Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш тюркологи съезчĕ пулса иртнĕ. Н.И.Ашмарин унта «Тюркологин иртнĕ кун-çулĕ тата унăн хальхи тăрăмĕ çинчен» доклад тунă. Доклад вĕçĕнче вăл тĕрĕк чĕлхе пĕлĕвĕ умĕнче тăракан чи кирлĕ, пысăк пĕлтерĕшлĕ задачăсене пĕтĕмлетсе, хăйне майлă программа палăртса панă. Кунта докладăн çав пайне кăшт кĕскетсе пичетлетпĕр.**

x x x

ТĔРĔК диалекчĕсене тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе халиччен тунă ĕçсене хăйне май «тӳнтерле», урăхла каласан çитменлĕхсене, мĕн тумаллине асра тытса пĕтĕмлетес пулсан, çакнашкал тĕп ыйтусене мала кăларни вырăнлă пулĕччĕ:

1/ Тĕрĕк чĕлхисенчен чылайăшĕн сасă тытăмне питĕ çителĕксĕр тишкернĕ; вĕсен сассисене çырура час-часах тĕрĕс мар, мелсĕр палăртаççĕ. Çакăн сăлтавĕ - сасăсен уйрăмлăхĕсене тĕплĕн, тарăннăн тĕпчеменни.

2/ Нумай чĕлхесен морфологине те лайăххăн тĕпчемен-ха; чылайăшĕсем пирки уйрăм ыйтусемпе çырнă ĕçсем кăна пур, пĕтĕмлетсе, пур ыйтăва та пĕр çĕрлĕн çырнă кĕнекесем - монографисем çук.

3/ Диалектсенчен ытларахăшĕн пайăр, хăйне майлă синтаксис уйрăмлăхĕсене уçса паракан ĕçсем вуçех çук. Халиччен тухнă грамматикăсенче синтаксис пулăмĕсене шухăшлав йĕрки - логика енчен кăна çутатса параççĕ. Çав вăхăтрах тĕрĕк пуплевĕнче питĕ пысăк вырăн йышăнакан кăмăл-туйăм сĕмĕсене - психологи енне пачах шута хумаççĕ.



4/ Ытларах чĕлхесен сăмах йышне тивĕçлипе пухса палăртман, тĕпчемен. Хăш-пĕрисемпе, сăмахран, пушкăрт, туркмен чĕлхисемпе, питĕ чухăн, кĕске словарьсем çеç пичетленсе тухнă. Хăш-пĕрисен, вăл шутра Кавказри тĕрĕк чĕлхисен сăмах пуянлăхне пухса тишкерме вара пуçламан тесен те юрать.

5/ Сăмах пултарулăхĕн хайлавĕсене нумай-нумай халăхсенне пухман, тĕпчесе вĕренмен. Уйрăммăнах культура пурнăçĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пысăк хуласем таврашĕнче ку ĕç япăх тăрать. Акă, Хусан-тутар чĕлхин уйрăм калаçăвĕсене вуçех тĕпчемен, вĕсен словарьне хатĕрлесе кăларман. Касимов тутарĕсен питĕ хăйне майлă калаçăвне тĕпчеме пуçламан та. Мишерсен, типтерсен, нухайсен тата Çĕпĕрпе Вăтам Азири тĕрĕк халăхĕсен калаçăвĕ пирки те çавнах калама тивет. Хăш-пĕр диалектсем çинчен ăслăлăх кĕнекисенче нимĕн те вуласа пĕлме çук.

6/ Тĕрĕк пуплевĕн кĕвĕлĕхне, тĕрĕк сăввин йĕрки-тытăмне çителĕксĕр тĕпченĕ.

7/ Тĕрĕк чĕлхисен танлаштаруллă грамматикипе çырнă пĕр ĕç те çук. Бетлинг тĕпчевĕнче хăш-пĕр чĕлхесенчен илсе кăтартнă танлаштару тĕслĕхĕсем пур, анчах тĕпрен илсен вăл - якут грамматики. 1881 çулта Радловăн «Çурçĕрти тĕрĕк калаçăвĕсен фонетики» /«Фонетика северных тюркских наречий»/ ятлă ĕçĕ нимĕçле пичетленсе тухнă. Анчах унта кăнтăрти калаçусене тивменпе пĕрех, чăваш чĕлхин тĕслĕхĕсене чылай чухне йăнăш кăтартнă. Ку тĕпчевре фонетика пайĕ кăна, морфологипе синтаксиса вара паян кун та тĕпчемен-ха.

Катановăн «Урянхай /шор/ чĕлхине тĕпчесе пăхни» /"Опыт исследования урянхайского языка"/ ятлă ĕçĕ, унта хальхи чĕлхесенчен тĕслĕхĕсем нумай пухнă пулин те, танлаштаруллă грамматика хакне тăраймасть. Ку кĕнекере вĕсене тӳртен, çиелтен кăна танлаштарнă, тарăннăн тишкермен.

8/ Тĕпчевçĕсем авалхи тĕрĕк чĕлхинчен /тен, урал-алтай шайĕ таранах/ хальхи диалектсенче сыхланса юлнă еткере - евĕрлев сăмахĕсене тĕпчеме пачах та тимлемеççĕ. Тĕрĕк чĕлхисенчи евĕрлев сăмахĕсен морфологи тытăмĕ питĕ хăйне майлă, унта сĕм аваллăх паллисем сыхланса юлнă. Ку вăл акă мĕнрен курăнать: чылай тĕрĕк чĕлхисем ытти енĕпе пĕр-пĕринчен питĕ инçе тăраççĕ, евĕрлев йĕрки-тытăмĕ вара пурин те пĕрешкелех. Финн чĕлхисенче те çав пулăмах палăрать. Çак авалхи чĕлхе еткерне тимлĕ пухас пулать: вĕсем пире хамăрăн тĕпчевсене сĕм авалхи саманаченех туса пыма май парĕç. Ун чухне сăмах тени тӳрĕнех этем шухăш-кăмăлне палăртнă, вăл хăй тавра мĕн курни-илтни пирки евĕрлесе пĕлтерме мел тупнă. Хальхи сăмахсем вара вĕсем - хăйсен малтанхи тымарĕсенчен пачах уйрăлса кайнă пĕтĕмлетӳллĕ символсем. Тĕрĕк сăмах тымарĕсен тупсăмне, сăмах пĕлтерĕшĕн аталанăвне тишкересси вăл тĕрĕк чĕлхе пĕлĕвĕнче - пуçламан каçалăк, ăна тирпейлĕ вырса пуçтарсан тухăçĕ илпек пулассӑн туйăнать. Чĕлхери кашни сăмахăн чăн малтанхи сĕмĕ вăл- тин амалакан этем шухăшĕн тĕкĕрĕ, авалхи йăла-халап астăвăмĕ, кивĕ пурнăç йĕркин пĕр сыппи, манăç пулнă кĕвĕ ахрăмĕ, кивĕ тĕнчекурăм палăкĕ, çутçанталăка ĕлĕк-авал епле ăнланнин йĕрĕ. Тĕрĕк чĕлхинче сăмах тытăмĕ ансат та уçăмлă, çавăнпа та ытти чĕлхесемпе танлаштарсан, кунта сăмахсен чи малтанхи, пуçламăш пĕлтерĕшĕсене шыраса тупма çăмăлрах. Çав пĕлтерĕшсене уçса палăртни авалхи чĕлхе ăнлавĕсен тĕчнине кĕме çул хывĕччĕ. Иртнĕ саманасен асамлă шевли ӳкнĕ çĕнĕ тĕрĕк чĕлхин сăмахĕсем вара паянхи сасăсемпе сĕм аваллăх сассисем пĕр кĕвĕллĕн, килĕшӳллĕн янăракан тĕлĕнмелле симфони пек илтĕннĕ пулĕччĕç.